26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАЙ 25 ЫТЛАРИКУН 108(6345) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

**Машинăпа тракторсен паркне пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, ЧАССР Наркомземĕпе Наркомзем ăн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ.**

74. **Куславкка МТС-ĕнчи Скворцов ертсе пыракан бригада.** Вăл çураки вăхăтĕнче планпа палăртнă 263 гектар вырăнне 275 гектар сухаланă, 170 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

75. **Н. М. Илларионов**—Куславкка МТС-ĕнчи тракторист. Вăл планпа палăртнă 35 гектар вырăнне 75 гектар сухаланă. 100 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

76. **С. И. Смирнова** — Куславкка МТС-ĕнчи трактористка. Вăл планпа палăртнă 35 гектар вырăнне 70 гектар сухаланă, 34 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

77. **К. И. Чернова** — Куславкка МТС-ĕнчи трактористка. Вăл планпа палăртнă 35 гектар вырăнне 66 гектар сухаланă, 48 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

78. **Г. Я. Ершов** — Куславкка МТС-ĕнчи тракторист. Вăл планпа палăртнă 60 гектар вырăнне 96 гектар сухаланă, 125 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

79. **В. А. Богданов** — Куславкка МТС-ĕнчи тракторист. Вăл планпа палăртнă 35 гектар вырăнне 80 гектар сухаланă, 120 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

80. **Е. А. Артемьева** — Куславкка МТС-ĕнчи трактористка. Вăл планпа палăртнă 35 гектар вырăнне 55 гектар сухаланă, 57 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

81. **Н. О. Делова** — Куславкка МТС-ĕнчи трактористка. Вăл планпа палăртнă 35 гектар вырăнне 51 гектар сухаланă, 45 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

82. **Е. К. Скворцова** — Куславкка МТС-ĕнчи трактористка. Вăл планпа палăртнă 35 гектар вырăнне 41 гектар сухаланă, 49 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

## Колхоз лашисене таса та мăнтăр тытса усрамалла

Пирĕн партипе правительство ялхуçалăхне механизацилессишĕн нумай çулсем хушши çине тăрса тăрăшрĕç. Социализмлă уйхирсенче машинăсемпе тракторсен станцийĕсем йышлăн организацилерĕç. Пирĕн республикăра кăна 25 МТС ĕçлет, вĕсен çĕршер тракторĕсемпе комбайнĕсем колхозсен анлă хирĕсенче ĕçлесе пысăк пулăшу параççĕ.

Çапах та ялхуçалăхĕнче колхоз лаши калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче лаша тухăçĕ енчен тата паракан турттăм вăйĕ пулса юлчĕ. Хăшпĕр тракторсен чылай пысăк пайне фронтăн ĕçлемелле илсе кайма тиврĕ. Тепĕр енчен, нимĕç фашисченсем хирĕç кĕрешекен пирĕн утлă çарсемпе пĕтĕм войскăсене те лаша нумай кирлĕ. Çапла вара лашасене нумайрах ĕрчетсе вĕсене йышне ÿстерни — пирĕн çĕршыван оборона вăй-хăватне ÿстерекенни, тăшмана тăтăклăн çĕнтерме пулăшни пулса тăрать. Ахальтен мар, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсенче совхозсенче лашасен йышне ÿстермелли тата вĕсене пăхса усрас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» ятарласа постановлени йышăнчĕ.

Лашасене ĕрчетес тата вĕсене пăхса усрас ĕçе республикăри малти тăракан районсемпе колхозсен аван пуса пырăççĕ. Çакна чылай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать. Советски районĕн колхозĕсенче 1942 çулта лашасем йышĕ 4,1 процент, Сĕнтĕр районĕнче 1,3 процент, Калинински районра 1,3 процент чухлĕ ÿснĕ. Уйрăм колхозсем тата лаша ĕрчетес енĕпе ĕçлекен уйрăм колхозниксем те иртнĕ çулта пысăк ÿсĕмсем турĕç. Çĕрпӳ районĕнчи «Çĕнĕ пурнăç» колхозăн лаша ферминче 20 кĕсререн 20 тиха илсе сыхласа хăварнă, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Правда» колхозăн лаша ферминче 14 кĕсререн 14 тиха илсе сыхласа хăварнă. Çак колхозсенче лашасене пăхса усрас ĕçри обезличкăна пĕтернĕ, лашасене таса витесенче, лайăх тăрантарса пăхса усраççĕ.

Анчах республикăра, пĕтĕмĕшпе илсен, лаша ĕрчетес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана эпир пурнăçа кĕртсе пыраймастпăрха. 1942 çулта лашасем ĕрчетмелли плана республика 86,2 процент кăна тултарчĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем чылайĕшĕ лаша ĕрчетес, пăхса усрас тата усă курас ĕçе ертсе пыма пăрахрĕç. Çавна пула лашасене пăхса усрас тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна, лашасемпе чунсăрла усă курнине халĕ те пĕтермен-ха, унта ут таврашĕсем юсавлă мар, выльăх апатне тирпейсĕр салатса пĕтереççĕ.

Лашасене начар пăхса усранă пирки тата вĕсемпе тирпейсĕр усă курнă пирки 1942 çулта Кувакино районĕнче лашасен 16,3 проценчĕ, Шăмăршă районĕнче лашасен 9,8 проценчĕ вилнĕ. Чылай колхозсенче тихасене пăхса ÿстерес, вĕсене чуптарас ĕç те çав тери чунсăрлан пăхаççĕ, хăшпĕр чухне ятарласах чуптармасăр хăвараççĕ. Вăрмар районĕнче 1.000 кĕсререн 57 кĕсреке çеç чуптарнă, Йĕпреç районĕнче 870 кĕсререн 99 кĕсрине çеç чуптарнă. Октябрьски районри Водопьянов ячĕпе тăракан колхозра иртнĕ çулта 25 кĕсререн пĕр тиха çеç илнĕ. Хăшпĕр çĕрте тата пĕтĕ кĕсресене пăхса усрассине ниçтăн сыхлануллă та çук. Шăмăршă районĕнчи колхозсенче, тĕрлĕрен тата чунсăрран тыткаланине пула, пĕлтĕр 200 кĕсре хăм пăрахнă. Çакă енĕ государство умĕнче пысăк айăпа кĕни пулать.

Лаша ĕрчетес ĕç çине чунсăрран пăхса йăланă халех пĕтермелле. Ялхуçалăхĕнчи ăйăрсене хаклă пуринчен ытла лашасене йышне ÿстерессине пулнинчен кил асра тытмалла. Лаша ĕрчетессен хальхи вăхăтра государствăна пысăк ĕçсен чен пĕрре, колхозсем умĕнче тăракан чи пысăк задачăсенчен пĕрн пулса тăнине асра тытмалла.

Государствăна лаша ĕрчетес тĕлĕшпе пани усрасан çителеклĕ. Кашни лашана лайăх хуçа пулмалла. Кашни çа усрани, лашасемпе усă курассичен обезличкăна пĕтери, кашни çенере чуптарса ÿстерни, кашни тихана сыхласа ÿстерес лайăх пăхса ÿстерни, лаша ĕрчетекен кадрсене вĕрентсе ÿстерсе пыни, ку ĕçре малта пыракансен опытне анлăн сарни, çапла вара лашасен йышне кашни колхозрах, кашни районрах çулсерен нумайлатса пыни кирлĕ.

Уйрăмăнах лашасемпе усă курасси çинчен чăрăнса тăмалла. Чылай колхозсенче, хăмăт-ĕнерчĕксем юсавлă мар е çителĕксĕр пирки, начар ут таврашĕпе ĕçлесе лашасене суранлатаççĕ те стройран кăлараççĕ. Çавна пула колхоз та, колхозниксем те пысăк сиен кураççĕ. Колхозăн кашни лаша валли хăйне юрăхлă хăмăт-ĕнерчĕк, урапа пултăр, лашапа ĕçлекен кашни колхозник уншăн ответлă пулнине туйтăр, — çакăн пек йĕрке тумалла колхозсенче.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ лашасен йышне ÿстермелли, вĕсене пăхса усрас тата вĕсемпе усă курас ĕçе лайăхлатмалли майсене тĕплĕн те уççăн кăтартса пачĕç. Партипе совет тата çĕрĕç органĕсен СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановлени çинчен кашни колхозникпе колхозницăна тĕплĕн ăнлантарса памалла, вĕсене çав постановленине тимлĕн пурнăça кĕртсе пыма мобилизацилемелле

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## Майăн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 22-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Майăн 21-мĕшĕнче пирĕн авиацичаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне çити тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 3 чугунçул эшелонне çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин 5 батарейине пусарнă, хурал тăракан карапа тата икĕ катера путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем разведка тунă, артиллерирен персе, тăшманăн çыннисемпе оборона сооруженийĕсене пĕтерсе тăкнă. Пур йышши хĕçпăшалсенчен те персе, кункаçа 400 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр соединени артиллеристĕсем 4 противотанковăй оруди, 17 пулемет пĕтерсе тăкнă, артиллерин 4 батарейине тата минометсен 5 батарейчне пусарса лартнă, тăшманăн 6 дзочĕпе блиндажне аркатса тăкнă.

* * *

Лисичанск районĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пĕр чаçăн подразделенийĕсем тăшмана атакăланă та ăна çирĕплетнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă. Гитлеровецсем хăйсен позицийĕсене каялла тытса илес тесе тата темиçе хут та контратака тунă. Çав çапăçура нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн пĕр танкне çунтарса янă, пĕр танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре артиллерипе минометсенчен персе тăнă. Пирĕн подразделенисем нимĕç салтакĕсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă, 2 дзота тата 14 блиндажа ишĕлтернĕ.

Гвардин кĕçĕн лейтенанчĕ Васильев ертсе пыракан снайперсен ушкăнĕ 10 кун хушшинче 125 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче лейтенант Ткачук командир пулса тăракан артиллери подразделенийĕ темиçе кун хушшинче тăшманăн 10 дзотне ытла вĕсенчи гарнизонсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Карталенко лейтенант ертсе пыракан разведчиксем тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та 3 землянкăна сирпĕнтерсе янă, 20 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн артиллеристсем тăшманăн малти позицийĕсене тата çывăхри тылне персе тăнă. 7 дзота ишĕлтернĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтернĕ, 2 орудие тата çар грузĕсем тиенĕ темиçе автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ чугунçул патĕнче засада тунă. Лайăх маскировка туса, партизансем чугунçулăн икĕ енĕпе те вырнаçнă. Часах тăшманăн çар эшелонĕ курăнса кайнă. Совет патриочĕсем вагонсем çине пулеметсемпе, автоматсемпе тата винтовкăсемпе пенĕ. Çапла пенипе нимĕçсен нумай салтакĕпе офицерне вĕлернĕ е амантнă. Смоленск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă тата темиçе тĕлте чугунçул рельсĕсене сӳтсе хунă. Çав участокра вара, поездсем темиçе кун хушши çӳреймен.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем этемĕн яланхи прависене тата тивĕçлĕхне таптаса, çынсене улталаса, хăратса тата тискеррĕн пусмăрласа, мирлĕ совет гражданĕсене Германие чуралăха хăваласа каяççĕ. Гитлеровецсем çав преступленисене тунма хăтланнă пулнă. Вĕсем совет çыннисем Германие хăйсен ирĕкĕпе кайнă пек кăтартма, унта кайма хăйсем килĕшнĕ пек кăтартма хăтланнă. Çак суя сăмаха нимĕç çарĕн командованийĕ хăй тăрă шыв çине кăларать. Çапла, акă, нимĕçсен фашистла влаçĕсем апрелĕн 20-мĕшĕнче çакăн пек приказ кăларнă (ăна Белорусси ССР-ĕнчи Пинск облаçĕнчи Давид ятлă пĕчĕк хулара çыпăçтарса тухнă): «Давид хули районĕнчи халăха çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: Германие яма рабочисем пухакан генеральчăй уполномоченнăй хушнă тăрăх, 1922-мĕш, 1923-мĕш, 1924-мĕш, 1925-мĕш, 1926-мĕш тата 1927-мĕш çулсенче çуралнă мĕнпур арçынсемпе хĕрарăмсене, çак районта пурăнаканнисене, Германие ĕçлеме мобилизацилеççĕ. Илекен пункта пыманшăн, Германие яма рабочисем пухакан генеральнăй уполномоченнăй хушнă тăрăх, çынсене хытă айăплаççĕ, персе пăрахма та пултараççĕ».

Çак документ преступникла гитлерла шайкăна тата тепĕр хут тăрă шыв çине кăларать: хăйсен çар промышленноçĕ валли чурасем тупма хăтланса, вĕсем совет гражданĕсене питĕ хаяррăн тыткалаççĕ, персе те пăрахаççĕ. Совет халăхĕ фашистла ирсĕрсем тăвакан тискер ĕçсене пурне те тĕрĕс шута илсе пырать, гитлерла чура сутуçисене хăйсен мĕнпур преступленийĕсемшĕн пысăк наказани парас кун инçе мар ĕнтĕ.

çусенче тата тăшман аэродромĕсем çинче нимĕçсен 313 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 61 самолет пĕтнĕ.

* * *

**Майăн 22-мĕшĕнче** пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 30 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, чугунçул составне аркатнă, артиллерин тата минометсен 9 батарейине пусарнă, тăшманăн хуралта çӳрекен карапне тата тральщикне сиенленĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем артиллерипе пехота хĕçпăшалĕнчен персе, тăшманăн çыннисемпе оборона сооруженийĕсене пĕтерсе пынă. Пĕр кун хушшинче 300 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 6 блиндажа ишĕлтернĕ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă. Пирĕн разведчиксен группи тăшман позицийĕсене атакăласа 30 нимĕçе çити вĕлернĕ. Пулемет, винтовкăсем тата автоматсем тытса илсе, пирĕн разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пĕр чаçăн разведка тăвакан отрячĕ ирхине ирех тăшмана атакăланă та халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илнĕ. Пирĕн боецсем çав пунктра çирĕпленсе ларса, пĕр кун хушшинче тăшманăн 10 контратакине сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсем пысăк çухатусем тӳснĕ. Тыткăна илнисем тата трофейăсем пур.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн чаçсем хăйсем тытса илнĕ рубежсене çирĕплетнĕ тата тăшман позицийĕсем çине персе тăнă. Пирĕн артиллери 3 дзота тата 4 блиндажа ишĕлтерсе антарнă, тăшманăн 2 танкеткине персе çĕмĕрнĕ тата артиллерипе минометсен темиçе батарейине пусарса лартнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре артиллерипе минометсенчен сайра хутран персе тăнă. Старши сержант Куриловăн оруди расчечĕ боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, наблюдательнăй пункта çĕмĕрнĕ тата артиллери батарейине пусарнă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пĕр чаçăн артиллерисчĕсем артиллерин 8 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарса лартнă. Пирĕн летчиксемпе зенитнăй артиллери нимĕçсен 13 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Украинăри районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен пысăк отрячĕ нимĕçсем вăйлăн хуралланакан чугунçул разъездне атакăланă. Партизансем çав разъездри оборудованийе аркатса тăкнă тата чугунçула темиçе тĕлте сирпĕнтерсе янă. Çав разъездăн хуралне пулăшмашкăн нимĕçсем çывăхри станцирен çынсем янă. Тăшман поезчĕ партизансем хунă минăсем çине пырса кĕрсе, хăй çитмелли вырăна çитеймесĕрех сирпĕнсе кайса чугунçулăн айккине ӳпĕнсе кайнă. Разъездра пулса иртнĕ çапăçура тата крушенне пула нимĕçсен 200 салтакпа офицер таран пĕтнĕ. Украинăран пĕлтернĕ тăрăх, партизансен Ворошилов ячĕпе тăракан отрячĕ енне 29 нимĕç салтакĕ хăйсен хĕçпăшалĕсемпе пĕрлех куçнă. Вĕсем хăйсемпе пĕрле 4 миномет, 2 пулемет, 22 винтовка тата темиçе пин патрон илсе пынă.

* * *

**Нимĕçсен пикировка тăвакан «Юнкерс—87» йышши бомбардировщикĕсен 2-мĕш эскадрин 2-мĕш группинчен тыткăна лекнĕ пилот — обер-фельдфебель Фридрих Штукер çапла каласа панă: «Кубань таврашĕнче сывлăшри çапăçусенче 2-мĕш эскадрăн 60 самолет хăйсен экипажĕсемпе пĕрлех пĕтнĕ. Кунсăр пуçне, совет авиацийĕ пирĕн аэродромсене тапăннă чухне тата 7 самолета пĕтерсе тăкнă, 11 самолета сиенленĕ». 2-мĕш эскадрăн 2-мĕш группинчи 5-мĕш отрядăн унтер-офицерĕ Отто Крейслер, Новороссийск районĕнче тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Пикировка тăвакан бомбардировщиксен группи тата 52-мĕш истребительнăй эскадрăн группи юлашки çапăçусенче 25 самолет çухатнă. Нумай самолета çĕр çинче пĕтерсе тăкнă. Анапа аэродромĕ çинче кăна совет авиацийĕ пыра-пыра тапăннипе пĕр уйăх хушшинче 40 ытла нимĕç самолетне пĕтерсе тăкнă». Нимĕçсен бомбардировка тăвакан эскадрин 3-мĕш группинчи летчик-наблюдатель Курт Лейзер çапла каласа панă: «Нимĕçсен сывлăшри вăйĕсен лару-тăрăвĕ питĕ начар. Çакна каласан та çитет: эскадрăна темиçе хут та çынсем хуша-хуша панă. Нумаях пулмасть совет летчикĕсем Сакире çĕр çинче пирĕн 9 самолета пĕтерсе тăкрĕç».**

* * *

Лотарингири пĕр хула çывăхĕнче гитлеровецсем çар тĕрми туса хунă. Юлашки 2 уйăх хушшинче çав тĕрмене 1.000 ытла нимĕç салтакне хупнă. Тытса хупнисенчен нумайĕшĕ фронтра çапăçусенче пулса аманнă, сывалнă хыççăн вара Совет Союзĕпе Германи фронтне кайма килĕшмен. Апрель вĕçĕнче тĕрмене подводнăй лодкăн экипажне илсе пынă, çав экипаж боевой задание пурнăçа кĕртме тинĕсе кайма килĕшмен.

## Майăн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 23-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Иртнĕ эрнере, майăн 16-мĕшĕпе 22-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапă-

# Комсомолăн Шупашкар хулинчи VII-мĕш конференцийĕ

Майăн 22-мĕшĕпе 23-мĕшĕнче комсомолăн Шупашкар хулинчи конференцийĕ пулса иртрĕ. Вăл виçĕ ыйту сӳтсе яврĕ: 1) ВЛКСМ горкомĕн ĕçĕсем çинчен отчетлă доклад, 2) ревизи комиссин отчечĕ, 3) ВЛКСМ горкомĕпе ревизи комисси составне суйласси.

ВЛКСМ горкомĕн VI-мĕшпе VII-мĕш конференцисем хушшинчи ĕçĕсем çинчен ВЛКСМ горкомĕн секретарĕ А. Оханджерова юлташ отчетлă доклад турĕ.

Хулари комсомол организацин мĕнпур ĕçне, — тет докладчик, — вăрçă задачисене пăхăнтарса туса пынă. Хулари çĕршер те пиншер комсомолецсем вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фронта кайрĕç. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан хаяр кĕрешӳсенче вĕсем хăйсене мухтавпа витрĕç. Вĕсенчен чылайĕшĕ Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илнĕ. Вĕсен хушшинче —хулари комсомол организацийĕ вĕрентсе çитĕнтернĕ пĕртăван Костинсем, Стешов, Беспалов, Соколов, пĕртăван Семячкинсем, гвардин кĕçĕн лейтенанчĕ Сергей Воробьев, летчик Маренин, Матвеев юлташсем т. ыт. те.

Тылри çамрăксем те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Сталин юлташăн историллĕ кăтартăвĕсене асра тытса, комсомолецсемпе çамрăксем тăван çĕршывпа фронт валли ытларах та ытларах продукци кăларассишĕн, геройла Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшса тăрассишĕн мĕнпур вăйĕсене хурса кĕрешеççĕ.

Хулари 63 комсомолеца производствăра тухăçлăн ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене панă. Чи лайăх производственник-комсомолецсем Слинько, Соколова, Быстров, Скворцова юлташсем ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илнĕ.

Промышленность предприятийĕсенчи комсомол организацийĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те чылай-ха. Комсомолецсем, уйрăмах союзра тăман çамрăксем хушшинче ĕç нормине тултарман юлташсем те сахал мар. Çамрăксем ĕç дисциплинине пăснине, производствăллă вĕренĕве начар организациленине чылай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать. Комсомол организацийĕсем çамрăк рабочисен пурнăçпа йăла условисене лайăхлатассишĕн те çителĕксĕр кĕрешнĕ.

Докладчик малалла комсомол организацисем шкулсенче мĕнле ĕçлени, агитациллĕ-пропагандăллă, çарпа физкультура ĕçĕсем мĕнле пулса пыни тата хулари комсомол организацийĕ мĕнле ӳссе пыни çинчен тĕплĕн чарăнса тăрать.

Конференци кун хыççăн ревизи комиссин отчетне итлерĕ. Ку ыйтупа Семенова юлташ доклад турĕ.

Пренире 24 çын тухса калаçрĕç. Вĕсем ВЛКСМ горкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕç тата вĕсене пĕтермелли майсене кăтартрĕç.

Трусова юлташ ВЛКСМ горкомĕ производство ыйтăвĕпе сахалтарах ĕçленине тата промышленность предприятийĕсенчи комсомол организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пынине кăтартса пачĕ. Горком представителĕсем предприятисенче сайра хутра çеç пулаççĕ, ытларах телефон тăрăх ертсе пыма пăхаççĕ.

— ВЛКСМ горкомĕ студентсем хушшинче ĕçлесси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхать, — тесе критиклет ВЛКСМ энергетика техникумĕ çумĕнчи комитечĕн секретарĕ Смирнов юлташ. — Çулталăк çурă хушшинче ВЛКСМ горкомĕ эпир вĕренӳ пахалăхĕпе дисциплинăшăн мĕнле кĕрешни çинчен пĕр информаци те ыйтман.

Карпушин юлташ (НКВД): комсомолăн хулари организацийĕсен ĕçĕнчи хĕсĕк вырăн вăл—марксизм-ленинизм вĕренĕвĕ сӳрĕк пулса пыни, тесе кăтартса парать. Ку ыйтупа халĕ ВЛКСМ горкомĕ те, пуçламĕш организацисем те начар ĕçлеççĕ. Комсомолецсем парткабинетра хутран-ситрен çеç пулаççĕ, докладсемпе лекцисене итлеме çӳремеççĕ.

Будеев юлташ çамрăксене çар ĕçне вĕрентесси кирлĕ пек пулса пыманни, Зарубин (Чăвашшвейпромсоюз) ВЛКСМ горкомĕ активпа сахал ĕçлени çинчен чарăнса тăраççĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Л. Михайлов ВЛКСМ горкомĕн ĕçне çивĕччĕн критиклет.

ВКП(б) горкомĕн секретарĕ Романова юлташ комсомол ретне çĕнĕ юлташсене илес ыйту çинче уйрăмăн чарăнса тăчĕ. Юлашки вăхăтра ку тĕлĕшпе хăшпĕр ӳсĕмсем пур. Иртнĕ çул хулара комсомол ретне 525 çынна илнĕ пулсан, кăçалхи 4 уйăх хушшинчех 596 çынна илнĕ. Анчах ку — ĕçĕн пуçламĕшĕ кăна.

Конференцире ВКП(б) Чăваш Обкомĕн тата Шупашкар горкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ. Вăл комсомолăн хулари организацийĕсен умне конкретлă задачăсем тăратрĕ.

Пренисене савăн пекех Бродоцкая, Александрова (ялхуçалăх институчĕ), Гопен, Мухаметов, старши лейтенант Русинов, Долина, Регинбогин, Аверьянов (НКВД), Водоватская, Димитриева, Сорокин, Горохова, Шабашев, Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров, Верблóвская, Стешова юлташсем хутшăнчĕç.

Конференци йышăннă решенире комсомолăн хулари организацийĕсем умне практикăллă задачăсем лартрĕ.

Ун хыççăн конференци виççĕмĕш ыйтăва пăхса тухрĕ. Вăрттăн сасăласа, ВЛКСМ горкомĕн çĕнĕ составне 35 член, 13 кандидат тата ревизи комиссине 5 çын суйларĕ.

Конференци пысăк çĕкленӳпе Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру ячĕ.

Конференци ĕçĕсене ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Белков, Ахазов, Никитин, Андреев юлташсем, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссин Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕ Серов юлташ, ВКП(б) горкомĕн секретарĕсем Романова, Федоров, Енчиков юлташсем хутшăнчĕç.

* * *

Ĕнер ВЛКСМ горкомĕн организациллĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум горкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма **Е. К. Трусова** юлташа, иккĕмĕш секретарĕ пулма **С. С. Коган** юлташа, çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма **А. Я. Сорокин** юлташа суйларĕ.

ВЛКСМ горкомĕн бюро членĕсем пулма **Е. К. Трусова, С. С. Коган, А. Я. Сорокин, З. М. Бродоцкая, Д. А. Соловьева, Н. А. Михайлова** тата **А. П. Горохова** юлташсене суйланă.

# Республика уйхирӗсенче

## ÇИТМЕНЛӖХСЕНЕ ВӐХӐТРА ПӖТЕРНИНЕ ПУЛА

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамӑр корр.). Машинно-тракторнӑй станцин ӗçӗнче çуракине тухас умӗн пысӑк çитменлӗхсем пулнӑ. Çураки туса ирттерес ответлӑха вӑхӑтра туйса илсе, МТС-ӑн парторганизацийӗпе политотделӗ вара çав çитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтермелли мерӑсем йышӑннӑ, пӗтӗм коллективӑн ӗçне çӗнӗлле организациленӗ. Çакна пула МТС çуракине аван хатӗрленсе тухрӗ. Трактористсем Сталин юлташӑн приказне пурнӑçа кӗртсе пырса, çуракинче тухӑçлӑн ӗçлерӗç.

У. Николаева юлташ ертсе пыракан хӗрарӑм-трактористкӑсен бригади çуракине 16 тракторпа тухрӗ. Ӗçе тытӑнас умӗн тракторсене тӗплӗн юсанӑскер, ку бригада çуракинче питӗ тухӑçлӑ ӗçлерӗ. Машинӑсемпе туллин усӑ курса, бригада çураки планне 135 процент тултарчӗ, горючие те чылай перекетлесе хӑварчӗ. Трактористка М. Анисова юлташ хӑйӗн тракторӗпе сменӑра куллен 7—8,5 гектар сухаларӗ. Вӑл хӑйӗн машинине ӗçре тимлӗн пӑхса пычӗ, 70 гектар сухалас вырӑнне М. Анисова юлташ 150 гектар сухаларӗ, 80 килограмм горючи перекетлерӗ.

Çавнашкалах О. Мефодьева юлташ та çуракинче хӑй пӗччен 85 гектар сухаларӗ. Бригадӑра агитацилле-ӑнлантарулла ӗç аван пулса пычӗ. Агитатор коммунистка Е. Григорьева хӑйне парторганизаци шанса панӑ ӗçе пултаруллӑн туса пырать.

Бригадӑсен ӗçне çирӗп организацилесе пынипе Красноармейски МТС-ӑн коллективӗ кӗске вӑхӑтрах çураки планне 105 процент тултарчӗ. Куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялава алла илессишӗн ӑмӑрту вӑйлӑн саралчӗ.

Владимиров юлташ ертсе пыракан комсомолецсен бригади, хӗрарӑм-трактористкӑсен бригадипе ӑмӑртса питӗ тухӑçлӑн ӗçлесе, МТС-ӑн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме пултарчӗ. Ку бригада çуракинчи ӗç планне 153 процент тултарчӗ. Уйрӑм трактористсем çуракинчи ӗç планне 200 процент тултарнӑ. Çураки умӗн çеç ВКП(б) членӗсен кандидатне кӗнӗ В. Егоров тракторист хӑйӗн ӗçлес пултарулӑхне аван кӑтартрӗ. Вӑл пӗччен 185 гектар сухаларӗ.

Хальхи вӑхӑтра МТС-ӑн тракторисчӗсем пурте ирхи çӗртме тӑваççӗ. Владимиров юлташӑн бригади майӑн 21-мӗшӗ тӗлне 20 гектар çинче ирхи çӗртме сухи тунӑ.

**С. Шадин.**

### Пахча-çимӗçсем лартса çулсерен пысӑк тупӑш илетпӗр

ИШЛЕЙ. Ярапайкассинчи «Красное знамя» колхоз çулсеренех хӑйӗн парникӗсемпе теплицисенче пахча-çимӗçсем ир ӳстерсе пысӑк тупӑш илет. Çавӑн пекех пирӗн колхозӑн çырла участокӗсем пысӑк. Çырла сутса та çулсерен чылай тупӑш илетпӗр. Иртнӗ çул теплицӑсенче симӗс сухан тата хӑяр ӳстерсе, ӑна хулари магазинсенче сутса, колхоз 13 пин тенкӗ тупӑш илчӗ. Кӑçал та çавӑн пекех. Теплицӑсенче сухан ир ӳстерсе, 32.020 тенкӗ тупӑш илтӗмӗр. Теплицӑра ир лартнӑ хӑяр тата арбуз çеçкисем çуралма пуçларӗç. Усӑ йӑрансем çине те майӑн 17-мӗшӗ тӗлне 0,05 гектар кишӗр, 0,10 гектар сухан лартрӑмӑр. 20 рама купӑста тата помидор калчисем ӳссе йӑрансем çине куçарса лартмалла пулчӗç.

Колхозӑн пахча-çимӗç бригадинче пирӗн 10 колхозница ӗçлет. Вӗсем çак ӗçе ӑнӑçлӑн ӗлкӗртсе пыраççӗ. Иртнӗ çул эпир 4 гектар çине 400 тӗп улмуççи лартрӑмӑр, кӑçал кӗре хирӗç татах 600 тӗп лартса хӑварма шутлатпӑр.

**С. Лебедев.**
«Красное знамя» колхоз председателӗ.

### *ЛАШАСЕНЕ ТӐРӐШСА ПӐХАТЬ*

КАЛИНИНО. Туçи Мӑратри «Клевер» колхоз членӗ Прокопий Григорьев конюх пулса 8 çул ӗçлет. Вӑл 68 çулта. Унӑн 4 ывӑлӗ отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ фронтӗнче çапӑçаççӗ. Вӑл Хӗрлӗ Çар валли лашасем сахал мар ӳстерсе панӑ. ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ лашасен шутне ӳстерес пирки кӑларнӑ постановление вуланӑ хыççӑн вӑл лашасене тата лайӑхрах пӑхма. Хӗрлӗ Çар валли мӑнтӑр лашасем ӳстерсе пама пулчӗ.

**В. Ландыш.**

### ВЦСПС-па СССР Наркомпищепромӗнче

Профсоюзсен Пӗтӗм Союзри Центральнӑй Совечӗпе СССР Наркомпищепромӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен совхозсен работникӗсен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 çулти пӗррӗмӗш кварталти итогӗсене пӑхса тухса, Шупашкарти совхоза (директорӗ Бахарев, политотдел начальникӗ Вишнев, рабочком председателӗ Гусарин юлташсем) виççӗмӗш преми пама йышӑннӑ.

### *Вулав çурчӗ лайӑх ӗçлеме пуçларӗ*

КАНАШ. «Красный Путиловец» колхозри вулав çурчӗ (заведующийӗ М. Карзаков юлташ) йӗркеллӗн ӗçлеме тытӑнчӗ. Çураки пуçланас умӗн ялсоветӗнче вулав çурчӗ валли 1.000 тенкӗлӗх ытла отечественнӑй вӑрçӑ вӑхӑтӗнче тухнӑ кӗнекесемпе брошюрӑсем илсе панӑ. М. Карзаков юлташ хӑйӗн ӗçне юратать. Вӑл отечественнӑй вӑрçӑн инвалидӗ. Колхозниксене час-часах фронтри боевой ӗçсем çинчен каласа парать. «Красный Путиловец» колхоз çуракине кашни çулленех юлса пынӑ, халӗ тӗпгӗрсем ӗçлесе пыраççӗ. Агитацилле-ӑнлантарулла ӗçе тӑтӑшах туса пыни колхозниксен ӗçлес хастарлӑхне нумай хӑпартрӗ. Вулав çурчӗ ӗçне лайӑхлатма агитаторсене ӗçлеме те чылай çӑмӑллӑх пулчӗ.

**И. Максимов.**

### *КОМСОМОЛПА ПРОФСОЮЗӐН ÇУЛЛАХИ КРОСӖ*

#### Кросӑн малтанхи кунӗнче

ИШЛЕЙ, майӑн 24-мӗшӗ. (Телефонпа). Енер 14 ялсоветри комсомолецсемпе çамрӑксем, шкул ачисем тикӗс мар вырӑнта чупас, граната ывӑтас тата пластунла шӑвас тӗлӗшпе ӑмӑртусенче пулчӗç. Кроса хутшӑннӑ 864 çынран 825-шӗ ГТО тата БГТО значокӗсен нормисене пачӗç, вӗсенчен 310 комсомолец.

Кросс уйрӑмӑнах Ишекри вӑтам шкулта организованно иртрӗ. Военрук Кузнецов юлташ тӑрӑшнипе, унта кроса 83 çамрӑк хутшӑннӑ. Шурча ялсоветӗнчи 45 çамрӑк, Кипеккасинчи 155 çамрӑк тикӗс мар вырӑнта чупас тата унти йывӑрлӑхсене çӗнтерес, гранатӑна инçе те тӗл ывӑтас тӗлӗшпе начар мар результатсем кӑтартрӗç. Кипеккасси ялсовет исполкомӗн председателӗ комсомолец Пайманов кроса аван ертсе пычӗ.

Çавӑн пекех Ярабайкассинчи 41 çамрӑк кросс программине лайӑх пурнӑçларӗç. С. Петрова 500 метра 2 минута та 10 секундӑра, Спиридонова 1000 метра 4 минута та 10 секундӑра чупса тухрӗç. А. Ильинпа В. Архипов граната ывӑтас тӗлӗшпе лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗç.

Кросс халӗ ытти ялсоветсенче те пысӑк çӗкленӳпе пулса пырать. Кроса йӗркелесе ирттерме 14 куст организациленӗ.

**З. Митрофанова,**
ВЛКСМ райкомӗн çарӗç енӗпе ӗçлекен секретарӗ.

#### *Стартра 565 çын пулчӗ*

КАНАШ. Енер хулари 565 çамрӑк профсоюзпа комсомолӑн çуллахи кросне ирттерме старта тухрӗç. Вӗсенчен 182-шӗ комсомолецсем. Ӑмӑртӑва хутшӑннисенчен 331 çын ГТО значокӗн нормисене, 173 çын БГТО значокӗн нормисене панӑ.

Кроса уйрӑмах 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулти (военрук Будяк юлташ), 13-мӗш номерлӗ вӑтам шкулти (военрук Виноградов юлташ) тата 6-мӗш номерлӗ ФЗО шкулӗнчи çамрӑксем организованно пухӑнчӗç.

1.000 метра чупас тӗлӗшпе Васильев (13-мӗш номерлӗ шкул), В. Галкин, А. Юткин (2-мӗш номерлӗ шкул) т. ыт. те лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗç. Вӗсем 1.000 метра 3 минутӑра чупса тухрӗç. Граната ывӑтас тӗлӗшпе хулари 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулта вӗренекен Шепелев, Г. Юткин палӑрчӗç.

**Г. П.**

### Пристань плана тултарчӗ

СССР Верховный Совет Президиумӗн «Тинӗспе юханшыв транспорчӗ çинче çарти пек йӗрке тӑвасси çинчен» йышӑннӑ указне пурнӑçа кӗртсе пырса, ӗç дисциплинине тата ӗç тухӑçлӑхне хӑпартса, Куславкка пристанӗ май уйӑхӗнчи грузсем турттармалли плана 20 кун хушшинче ытлашшипех тултарчӗ: тоннӑпа шутласан — 229 процент, тонна-километрпа шутласан — 129 процент пурнӑçларӗ. Пристань коллективӗ тинӗспе юханшыв транспорчӗ çинче туса хунӑ йӗркене, Правительство Указне пӗр пӑсмасӑр чыслӑн пурнӑçласа пырать.

**Горшков.**
Пристань начальникӗ.

### *ШКУЛТИ ПӖЛӲ ТӖРӖСЛЕВӖСЕМ*

#### Малтанхи кунсенче палӑрнӑ çитменлӗхсем

ШАХАСАН. (Хамӑр корр.). Вӗренӳ çулӗ вӑрçӑн йывӑр условийӗсенче иртрӗ пулин те, кӑçал нумай шкулсем ачасене лайӑх вӗрентнӗ. Кошнаруйӗнчи туллимар вӑтам шкулта вӗренекенсем (шкул директорӗ А. Максимов) тӗрӗслевӗн малтанхи кунӗнчех хӑйсен пултарулӑхне лайӑх кӑтартрӗç. Унта «начар» паллӑ илнисем вуçех пулмарӗç.

Анчах Шӑхасанти вӑтам шкул (директорӗ В. Нимаков) пӗлӳ тӗрӗслевӗсене ирттерме тӗплӗн хатӗрленнӗ тесе калама çук. Малтанхи кунах шкула 5 вӗренекен пыман. 7-мӗш «А» класра чӑваш чӗлхипе çыру ӗçӗ пулчӗ. Унта ассистент вырӑнӗнче чӑваш чӗлхине пӗртте пӗлмен, чӑвашла калаçнине те ӑнланман Морозова учительница ларчӗ. 4-мӗш класра Слесарева учительница тӑван чӗлхепе çыру ӗçӗ ирттерчӗ. Испытание малтанах хатӗрленмен пирки, Слесарева 20 минута вӑхӑта ахалех ирттерчӗ. Çавӑнпа вара ачасене васкатса çыртарчӗç. Тӗрӗслӳ хыççӑн 21 вӗренекентен 5 ача «отлично», пӗр ача «хорошо», 10 ача посредственно», 4 ача «плохо», пӗр ача «очень плохо» паллӑсем илчӗç. Анчах Слесарева учительница тата Алексеев ассистент йӑнӑшсене тӗплӗн тӗрӗслемен. Кайран тӗрӗслесе тухсан, вӗсем асӑрхаман йӑнӑшсене темӗн чухлех тупнӑ.

Г. Григорьев веренекене «посредственно» лартнӑ пулнӑ. Кайран тӗрӗсленӗ хыççӑн вӑл çырнинче çӗнӗрен тата 10 йӑнӑш тупнӑ, Н. Герасимова çырнинче 9 йӑнӑш, В. Константинова çырнинче 7 йӑнӑш тупнӑ т. ыт. те.

8-мӗш «А» класра физикӑпа тӗрӗслӳ иртрӗ. Тӗрӗслевсене, васканипе, вӗреннӗ чухне усӑ курнӑ нагляднӑй пособисемпе приборсене илсе пыман. 5-мӗш «А» класра вырӑс чӗлхипе тӗрӗслӳ пулчӗ. Спиридонова вӗренекен билетри ыйтусем çине пачах ответлеймерӗ. Ӑна çапах та «посредственно» лартнӑ. Тӗрӗслеве çапла ирттерни вӑл ӑна ячӗшӗн туни çеç пулать.

**В. Веселов,**
**М. Родионов.**

#### Савӑнтаракан результатсем

ÇЕМЕРЛЕ, майӑн 24-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). Хулари иккӗмӗш номерлӗ вӑтам шкулта пӗлӳ тӗрӗслевӗсем пысӑк ӑнӑçлӑхпа пулса пыраççӗ. Тӗрӗслевсенче пулнӑ вӗренекенсем вӗренӳ программине тӗплӗн пӗлнине кӑтартса параççӗ.

Малтанхи кун 7-мӗш классенче вӗренекенсем вырӑс чӗлхипе (çыру ӗçӗ), 10-мӗш классенче вӗренекенсем алгебрӑпа, 8-мӗш класра вӗренекенсем нимӗç чӗлхипе тӗрӗслевсенче пулчӗç. Шкулта «начар» паллӑ илнӗ пӗр вӗренекен те пулмарӗ. 10-мӗш «Б» класра вӗренекенсем пурте «отлично» тата «хорошо» паллӑсем кӑна илчӗç.

Пӗлӳ тӗрӗслевӗсен иккӗмӗш кунӗнчи результатсем те савӑнмалла пулчӗç. 10-мӗш «А», 7-мӗш, 9-мӗш тата 6-мӗш классенче вӗренекенсем пӗри те «начар» паллӑ илмерӗç. Уйрӑмӑнах 9-мӗш класра вӗренекенсем çар ӗçне юратса вӗренни курӑнчӗ. Класри 34 вӗренекенрен 17-шӗ «отлично», 10-шӗ «хорошо» илчӗç.

Виçӗ кун хушши пынӑ тӗрӗслевсем 10-мӗш тата 7-мӗш классенче вӗренекенсем çирӗп пӗлӳ илнине кӑтартса пачӗç.

**Х. Лисин.**

### Нимӗç самолечӗсем Курска тапӑнни

Майӑн 22-мӗшӗнче ирхине нимӗç бомбардировщикӗсен пысӑк ушкӑнӗ истребительсем хӳтӗлесе пынипе Курск хулине тапӑннӑ. Тӑшман самолечӗсене хула патне пынӑ чухне пирӗн истребительсем çавӑрса илнӗ тата зенитнӑй артиллери хӑватлӑн пенӗ. Курск çине нимӗç самолечӗсенчен хӑш-пӗрисем кӑна тухма пултарнӑ. Ним тӗлли-паллисӗр пӑрахнӑ бомбӑсем пурӑнмалли çуртсене пӑртак сиен кӳнӗ. Граждӑнла халӑх хушшинче пысӑк мар жертвӑсем пур.

Тӑшман тапӑннине сирсе янӑ чухне сывлӑшри çапӑçусенче пирӗн истребительсем, туллимар данныйсем тӑрӑх, нимӗçсен 56 самолетне персе ӳкернӗ. Унсӑр пуçне тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 9 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Çапла вара, мӗнпурӗ сахалтан та 65 нимӗç самолетне персе ӳкернӗ. Пирӗн 10 самолет пӗтнӗ.

# *Ют çӗршывсенче*

### ЧЕРЧИЛЛЬПЕ РУЗВЕЛЬТӐН ВАШИНГТОНРИ КАЛАÇĂВĔСЕМ

ЛОНДОН, майӑн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пӗлтерет: ӗнер каçхине Рузвельтпа Черчилль çар штабӗсен начальникӗсемпе тӗл пулнӑ. Тӗлпулура вӗсем малашнехи вӑрçӑ мероприятийӗсем тӗлӗшпе панӑ хӑйсен сӗнӗвӗсем пирки малтанлӑха тунӑ заключенисемпе паллашнӑ. Ӗнерхи тӗлпулу хыççӑн Рузвельт президентпа Черчилль эрнен юлашки кунӗсенче çав заключенисене тӗпчесе тухаççӗ. Рузвельтпа Черчилль татӑклӑ решенисене çитес эрнен малтанхи кунӗсенче йышӑнӗç тесе шутлаççӗ.

### РУЗВЕЛЬТ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, майӑн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Рузвельт пресс-конференцире каланӑ тӑрӑх, Рузвельтпа Черчилль хушшинчи калаçусем аван пыраççӗ. Рузвельт çапла каланӑ: паян штабсен начальникӗсен пӗрлешӳллӗ ушкӑнӗ Рузвельтпа Черчилле пӑхса тухма вӑрçӑ планӗсен малтанлӑха тунӑ варианчӗсене памалла. Рузвельтпа Черчилль эрнен юлашки кунӗсенче çав вариантсемпе паллашса тухаççӗ те ун хыççӑн вара татӑклӑ плансем хатӗрлесе йышӑнаççӗ. Пичет представителӗсем Италин пуласлӑхӗ çинчен ыйтнӑ. Рузвельт çав ыйтӑва хирӗç çапла каланӑ: Итали тӗлӗшпе ӑна пачах парӑнтармалли политикӑна тытса пыратпӑр, тенӗ. Черчилль конгресра çапла каланӑччӗ: американецсен хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен чи пысӑк пайӗ Лӑпкӑ океан районӗнче тӑрать, тенӗччӗ. Пичет представителӗсем çавӑн çинчен ыйтнине хирӗç Рузвельт çапла каланӑ: Черчилль çапла калани американецсен çарӗ тӗлӗшпе те тата тинӗç флочӗ тӗлӗшпе те тӗрӗс, тенӗ, унтан хӑй енчен çапла хушса каланӑ: американецсен сывлӑшри çарӗн çурри Лӑпкӑ океан районӗнче вырнаçса тӑрать, тенӗ. Китайӑн ютçӗршыв ӗçӗсен министрӗпе Сун-Цзы-веньпе хӑй мӗн калаçни тӗлӗшпе Рузвельт çакна палӑртса панӑ: американецсем Китая пулӑшас ӗç аван пырать, тенӗ. Юлашкинчен Рузвельт çапла каланӑ: Сталин патне янӑ хамӑн послание эпӗ халлӗхе ӑнлантарса пама пултараймастӑп-ха, тенӗ.

### СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙӖН ӖÇӖСЕМ

ЛОНДОН, майӑн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер кӑнтӑрла американецсен йывӑр бомбардировщикӗсен икӗ пысӑк соединенийӗ Вильгельмсгафенпа Эмденри подводнӑй лодкӑсем тӑвакан верфьсене тапӑннӑ. Тӑшман истребителӗсем вӑйлӑн хирӗç тӑнӑ пулин те, самолетсем бомбӑсем нумай пӑрахнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тӑшманӑн истребителӗсене нумай пӗтерсе тӑкнӑ.

Майӑн 22-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Англин «Москито» йышши бомбардировщикӗсем Берлина тата Орлеанри чугунçул объекчӗсене тапӑннӑ.

Истребительнӑй авиацин самолечӗсем Франци çыранӗсем çывӑхӗнче тӑшманӑн 2 суднине шыва путарнӑ. Истребительсен ытти соединенийӗсем çурçӗр Францири чугунçул объекчӗсене тапӑннӑ.

Вӑтаçӗр тинӗс бассейнӗнче союзниксен йывӑр бомбардировщикӗсем Кӑнтӑр Италири тата Сицилипе Сардини утравӗсем çинчи чылай çар объекчӗсене атакӑланӑ. Тӑшманӑн портсенчи сооруженийӗсене, тавар склачӗсене тата аэродромӗсене пысӑк сиен кӳнӗ. Çӗр çинче ларнӑ самолетсене нумай пӗтерсе тӑкнӑ, сывлӑшри çапӑçусенче тӑшманӑн 29 самолетне персе ӳкернӗ.

### БЕНЕШ ТУХСА КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК. (ТАСС). «Тулашри çыхӑнусен совечӗ» апатлану тунӑ. Унта Чехословаки президенчӗ Бенеш сӑмах тухса каланӑ.

США президенчӗн тӑватӑ ирӗклӗх çинчен каланӑ сӑмахӗпе килӗшсе, Бенеш çапла каланӑ: союзниксен перемири условийӗсене вӑрçӑ ӗçӗсем пӗтичченех хатӗрлесе хумалла. Çав перемири условийӗсенче пулас мир договорӗн тӗп паллисем пулмалла, тенӗ. Бенеш малалла çапла каланӑ: пӗрлешӳллӗ нацисем пӗтӗм тӗнчери çӗнӗ организацие туса хурӗç, çав организацие ӑна опыта шута илсе тӑвӗç, вӑл практикӑллӑ организаци пулса тӑрӗ, тенӗ.

Вӑрçӑ хыççӑнхи Европӑра Совет Союзӗпе Франция мӗнле вырӑн йышӑнса тӑмалли çинчен Бенеш çапла каланӑ: «Вӑрçӑ хыççӑнхи мире организацилес ӗçре Совет Союзӗ хӑйне тӗрӗссипе тивӗçлӗ вырӑна пӗтӗмӗшпе йышӑнӗ», тенӗ. Бенеш малалла çакна палӑртнӑ: 1937—38-мӗш çулсенче диктаторсене йӗркене кӗртес тата Совет Союзне Европӑри ӗçсенчен пӑрса ярас политикӑна пурнӑçа кӗртсе пыни хальхи вӑрçӑн чӑн пуçламӑшӗ пулса тӑчӗ, тенӗ. «Унтанпа эпир хамӑр илнӗ урока ӑнланса çитрӗмӗр,—тенӗ Бенеш. — Шанмасӑр тӑрасси вырӑнне политикӑпа çар тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗçле пуçларӑмӑр». «Европӑна çӗнӗрен ура çине тӑнӑ вӑйлӑ Франци кирлӗ», — тенӗ Бенеш. «Эпир çапла шутлатпӑр: пӗтӗмӗшле мир тӑвас çӗнӗ политикӑна пурнӑçа кӗртсе пынӑ çӗрте Пӗрлешӳллӗ Штатсем вӑрçӑ пӗтсен те хӑйсен вырӑнне йышӑнса тӑрӗç» тенӗ вӑл малалла.

Вӑтаçӗрти Европа çинчен Бенеш çапла каланӑ: «Германи ыйтӑвне тӗрӗс татса париччен эпир Вӑтаçӗрти Европа ыйтӑвӗсене татса парассине пуçлама пултараймастпӑр. Германия тӗрӗслӗхсӗр агресси туса тытса илнӗ территорисене, Австрирен пуçласа пурне те каялла тавӑрса памалла», тенӗ.

«Хальхи вӑрçӑ, — тенӗ малалла Бенеш, — виçӗ славян халӑхӗн — Польшӑн, Чехословакин тата Совет Союзӗн пӗр-пӗринпе таччӑн, туслӑн, законлӑ çыхӑнса тӑма кирлине кӑтартса пачӗ... Çав виçӗ çӗршыв пӗр-пӗринпе пӗтӗмпех килӗшсе çитме пултарсассӑн, Германия Хӗвелтухӑçнелле çаткӑн империалистла талпӑнассине ӗмӗрлӗхе пӗтерсе лартма пулӗ... Килӗшсе çитме пултараймасассӑн — Европӑра çӗнӗрен катастрофа пулӗ. Германия вара кирек мӗн пулсан та пӗтӗм тӗнчери виççӗмӗш вӑрçа пуçласа яма сӑлтав тупатех». Юлашкинчен Бенеш çакна палӑртса панӑ: вӑрçӑччен пӗтӗм тӗнчери чи прогрессивнӑй демократиллӗ çӗршывсенчен пӗри пулса тӑнӑ Чехословакия вӑрçӑ хыççӑн та хӑйӗн ӗлӗкхи йӑлисене тытса пырӗ, тенӗ.

### Комсомолецсем çуракинче

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан кӗрешӳре республикӑри комсомолецсемпе çамрӑксем хӑйсен хисеплӗ вырӑнне йышӑнчӗç. Кӑçалхи çуракине ӑнӑçлӑн ирттерес тесе, вӗсем хӑйсен фронтри юлташӗсем пек ӗçлеме тӑрӑшаççӗ.

Колхозсенчи тата МТС-сенчи çамрӑксем, ялхуçалӑхӗнче тӗп вӑй пулса тӑракансем, çуракине хатӗрленнӗ ӗçре лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗç. МТС-сенче тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсас тӗлӗшпе комсомолецсемпе çамрӑксен 125 бригади ӗçленӗ. Вӗсем çуракине хатӗрленнӗ тапхӑрта 7.000 ытла ялхуçалӑх машинине тата инвентарьсене юсанӑ. Колхоз çамрӑкӗсем вӑрлӑх хатӗрлес, лашасене çуракине ӗçлеттерме хатӗрлес, машинӑсемпе тракторсене юсас ӗçсенче колхозсемпе МТС-сен руководителӗсене вӑйлӑн пулӑшса тӑнӗç. Комсомолецсемпе çамрӑксем ялхуçалӑх машинисене юсама 61.039 тенкӗлӗх запасла пайсем пухрӗç, 19.778 тенкӗлӗх запасла пайсем хӑйсен вӑйӗпе çӗнетсе турӗç.

Мускав облаçӗнчи ялхуçалӑхӗнче малта пыракан çамрӑксем 1943 çулхи вӑрçӑ тырпулӗшӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва пуçарса ячӗç. Чӑваш республикинчи колхозсемпе МТС-сенчи çамрӑксем те çав ӑмӑртӑва анлӑн хутшӑнчӗç. Çураки пуçланас умӗн республикӑри çӗршер трактор бригади, тракторсемпе тракторисчӗсем, комсомолецсемпе çамрӑксем тракторнӑй бригадӑсен кӑçалхи çуракинче ӗç нормисене ирттерсе тултарма, ӗçе пахалӑхлӑ тума, горючие тата сӗрмелли япаласене перекетлеме обязательство илчӗç.

Тӑван республикӑн уйхирӗсенче çураки ӗçӗ вӗçленсе пырать. Халӗ ӗнтӗ тракторисчӗсемпе трактористкӑсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн малтанхи итогӗсене тума пулать.

Республикӑри 167 трактор (бригади, 1.479 тракторист (вӑл шутра 1.035 хӗрарӑм), комсомолецсен 15 трактор бригади, 637 комсомолец хӑйсен сезонри нормине ӑнӑçлӑн тултарнӑ. Елчӗк, Шӑхасан тата Сӗнтӗр районӗсенчи МТС-семпе колхозсен çамрӑкӗсем вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӳре лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаççӗ. Елчӗк МТС-ӗнче тракторнӑй бригадӑсен ӗçне ертсе пыма комсомолецсем хастар хутшӑнаççӗ. Уйрӑмах Сӗнтӗр, Варнар, Ӗлӗк тата Сӗнтӗр МТС-сенчи комсомолецсемпе çамрӑксем те çуракинче мухтава тивӗç ӗçлерӗç.

Çӗршер комсомолецсемпе çамрӑк трактористсем производствӑра ӗçленипе пӗр вӑхӑтрах агитацилле-массӑллӑ ӗçе те активлӑн хутшӑнчӗç. МТС-сенчи 337 комсомолец агитаторсем пулса, 334 комсомолец стена хаçачӗсемпе боевой листоксен редакторӗсем пулса ӗçлерӗç.

Тӑвай МТС политотдел начальникӗн комсомол енӗпе ӗçлекен помощникӗ Иванов юлташ ертсе пыракан агитбригада çураки вӑхӑтӗнче бригадӑсенче 69 номер стена хаçачӗ кӑларнӑ, 12 концерт панӑ. Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказне виçӗ пин ытла колхозника ӑнлантарса панӑ. Çураки вӑхӑтӗнче 124 çамрӑк комсомола кӗме заявлени панӑ.

Шӑхасан районӗнче МТС ӗçлесе паракан колхозсенче 370 комсомолец çураки ӗçӗсене активлӑн хутшӑннӑ. Вӗсенчен 175 комсомолец плугарьсем пулса, 37 комсомолец сеяльщиксем пулса, 118 комсомолец сӳрекенсем пулса тухӑçлӑн ӗçленӗ. 115 агитатор уйра ӗçлекенсем хушшинче 1.825 хутчен калаçу, 125 доклад туса ирттернӗ, 387 номер стена хаçачӗ кӑларнӑ. Тельман ячӗпе тӑракан колхозри комсомолецсем (комсомол организацин секретарӗ Лукин юлташ) ӗç нормине тӑтӑшах 150—200 процент тултарса пынӑ.

Сӗнтӗр районӗнчи колхозсенче çуракине ирттерме комсомолецсен 25 бригадине организациленӗ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах МТС политотдел начальникӗн комсомол енӗпе ӗçлекен помощникӗ Алихметкина юлташ тӑрӑшса ӗçленӗ. 1905 çул ячӗпе тӑракан колхозӑн председателӗ комсомолец Елагин хӑй те çураки ӗçӗсене тӳррӗмӗнех хутшӑнса, ӗç нормине 200 процент таран тултарса пынӑ. Çак колхозри А. Мастюков, В. Чернов, П. Маряшкина комсомолецсем колхозниксене лайӑх ӗçлеме агитациленӗ кӑна мар, хӑйсем те тухӑçлӑн ӗçленӗ.

Кун пек тӗслӗхсене нумай илсе кӑтартма пулать. Вӗсем пурте комсомолецсемпе çамрӑксем кӑçалхи çуракин организаторӗсем пулнине кӑтартса параççӗ.

Анчах çакӑ вӑл—комсомолецсемпе çамрӑксем вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан кӗрешӳре тунӑ малтанхи çитӗнӳ кӑна-ха. Комсомолецсемпе çамрӑксен умӗнче халӗ питех те ответлӑ задача—çураки ӗçӗсене çитес икӗ-виçӗ кун хушшинче вӗçлес задача тӑрать. МТС политотдел начальникӗсен комсомол енӗпе ӗçлекен помощникӗсен, ВЛКСМ райкомӗсен работникӗсен комсомолецсемпе çамрӑксене ялхуçалӑх ӗçӗсене татах вӑйлӑнрах мобилизацилесе пымалла.

**Н. КОНДАКОВ,**
**ЧАССР Наркомземӗн Политсектор начальникӗн комсомол енӗпе ӗçлекен помощникӗ.**

### *КӖСКЕН*

▲ Чили правительстви Вишипе, Венгрипе, Румынипе тата Болгарипе дипломатиллӗ çыхӑну тытма пӑрахнӑ.

▲ Çак кунсенче Сицили проливӗнчи Ла-Галит утравӗ çине союзниксен войскисем пырса аннӑ. Итальянецсен çав утрав çинчи гарнизонӗ союзниксен войскисем пыриччен тарнӑ. Союзниксен войскисем, вӑл утрава пӗр пемесӗр, пӗр çухатусӑр йышӑнса илнӗ.

### Пӗлтерӳ

Майӑн 28-мӗшӗнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомӗн Парткабинетӗнче (Чувашская ур., 6) Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказне вӗренекенсене пулӑшас шутпа «Фашистсен лагерӗнчи кризис» ятлӑ темӑпа лекци пулать.

Лекцие ВКП(б) Горкомӗн лекторӗ Давтян юлташ вулать.

**ВКП(б) Горкомӗн Парткабинечӗ.**

**Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Шупашкарти эрех комбинатне ялхуçалӑхӗнче ялан ӗçлеме рабочисем кирлӗ. Пӗччеиисене общежити параççӗ, столовӑй пур, кашнине хӑйшӗн пахча-çимӗç лартса тума çӗр участокӗ параççӗ.

Чӑваш АССР Наркомздравӗн маляри станцине Атӑлӑн сулахай енче маляри вӑрӑмтунисемпе кӗрешме бонификаторсем кирлӗ. Хваттер параççӗ. Çак адреспа ыйтса пӗлмелле: Шупашкар хули, Красноармейская урам, 3-мӗш номерлӗ çурт.

Хлебокомбината ялан ӗçлеме слесарьсем, слесарь-жестянщиксем, платниксем, лавçӑсем, экспедиторсем, подсобнӑй рабочисем кирлӗ.

Çак адреспа ыйтса пӗлмелле: Шупашкар хули, Аптечная урамӗ, 4.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0—67, редакци секретарӗн—4—26, парти пурнӑç пайӗн—3—99, ялхуçалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин—0—23.

НІ 340

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2 Ф. 6. 53. 12.п.